26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
МАЙ
9
ВЫРСАРНИКУН
97(6334) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. ВЫШИНСКИЙ юлташ Англипе Америка пичечĕн Мускаври представителĕсене кăçалхи майăн 6-мĕшĕнче тунă заявлени

Совет Союзĕпе Польша хушшинчи отношенисем тĕлĕшпе Англипе Америка прессин хăшпĕр представителĕсем ыйтнă пирки, эпĕ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ хушнипе, çак ыйтăва пырса тивекен хăшпĕр фактсемпе тата самантсемпе сире паллаштарма кирлĕ тесе шутлатăп.

Çакă вăл хальхи вăхăтра уйрăмах кирлĕ, мĕншĕн тесен, Польшăн хальхи правительстви, Польша правительствинчи тата Польша пичетĕнчи гитлерла элементсен влиянийĕ айне лексе, Совет правительствине Польша правительствипе тытакан сыхăнусене татас тĕлĕшпе паллă решени йышăнмалла туса хучĕ, Польшăн официальнăй çыннисем, Польша пичечĕпе радио вара Совет Союзĕпе Польша хушшинчи сыхăнусен ыйтăвĕ тĕлĕшпе нумай тĕрлĕ суя пĕлтерӳсем малалла сарса пыраççĕ. Çак ĕçре вĕсем, тăтăшах тенĕ пек, обществăн анлă ушкăнĕсем çав сыхăнусем тĕлĕшпе тĕрĕс фактсем çинчен пĕлменнипе усă кураççĕ.

1. Польшăн ССР Союзĕнче туса йĕркеленĕ çар чаçĕсем çинчен

1941 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче Польшăпа Совет Союзĕ хушшинче килĕшӳ тунă хыççăн тата çав çулах августăн 14-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Польша командованийĕсем хушшинче вăрçă ыйтăвĕсемпе тунă килĕшӳ тăрăх, Совет Союзĕн территорийĕ çинче Польша çарне туса йĕркелеме тытăннă. Çавăн чухнех Совет Союзĕпе Польша командованийĕсем калаçса татăлнă тăрăх Польша çарĕн хисепне 30 пин çынран тума палăртнă, çакăнпа пĕрлех тата Андерс генерал сĕннĕ тăрăх, пĕрпĕр дивизи хатĕр пулса çитсен, ăна сийĕнчех тивĕçлĕ фронта ăсатма кирлĕ тесе йышăннă.

Совет правительстви кăтартса панă тăрăх, советăн çар влаçĕсем, Польша чаçĕсене туса йĕркелессине васкатас ĕçпе çыхăнса тăракан мĕнпур ыйтусене мĕнле те пулин хăвăртрах татса пама Польша командованине пур енĕпе те пулăшу парса тăрса, Польша çарне паракан снабжение Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕрен туса йĕркелекен чаçĕсене паракан снабженипе пĕтĕмĕшпех танлаштарнă. Польша çарне туса йĕркелессипе тата ăна тытса тăрассипе çыхăннă мероприятисем валли укçа-тенкĕ парса тăма Совет правительстви Польша правительствине 65 миллион тенкĕлĕх процентсăр кивçен укçа-тенкĕ панă, çав кивçен панă укçа-тенкĕ виçине кайран 1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕ хыççăн 300 миллион тенкĕне çити ӳстернĕ. Совет правительстви уйăрса панă çав укçа-тенкĕсемсĕр пуçне, Польшăн çĕнĕрен туса йĕркелекен çар чаçĕсенчи офицерсен составне 15 миллион тенкĕ ытла каялла тавăрмалла мар пособи панă.

Çакна палăртмалла: Польша çарне малтан 30 пин çынран тума палăртнă пулин те, 1941 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне Польша çарĕн хисепĕ 41.561 çынна çитнĕ, вĕсенчен 2.630 çын офицерсем пулнă. Польша çарĕн йышне 96 пин çынна çити ӳстересси пирки 1941 çулхи декабрь уйăхĕнче Сикорский генерал Польша правительстви ячĕпе панă сĕнӳ çине Совет правительстви ырă кăмăлпа пăхрĕ. Çав решение йышăннă хыççăн Польша çарĕ 6 дивизи чухлĕ ӳссе саралса пынă, кунсăр пуçне тата офицерсен шкулĕн, запасри чаçсен тата çара вăйлатмалли чаçсен малтан палăртнă 3 пинлĕ хисепне 30 пин çынна çити ӳстерме йышăннă. Польша правительстви кăмăлланă тăрăх, Польшăн мĕнпур çарне ССР Союзĕн кăнтăрти районĕсене куçарнă, — çакна ăна, пуринчен ытларах, çанталăк условийĕсене шута илсе тунă, çавăнта вара лагерьсем тума тытăннă, штабсене, çар шкулĕсене, санитари учрежденийĕсене вырнаçтарса тухнă т. ыт. те.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисене пăхмасăрах, 1942 çулхи февраль уйăхĕнче Польша çарĕ палăртнă дивизисен хисепĕ чухлĕ саралса кайнă, унăн ретĕнче вара 73.415 çын шутланса тăнă. Анчах та, хăйĕн чаçĕсене май килнĕ таран хăвăртрах вăрçа кĕртме хатĕр тăни çинчен Польша командованийĕ темиçе хутчен те шантарса каланине пăхмасăрах, тĕрĕссипе çав чаçсем фронта тухассине пĕрмаях кая хăварса пынă. Польша çарне туса йĕркелеме тытăннă чухне ăна хатĕрлесе çитермелли срока 1941 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тесе палăртнă, çакăнпа пĕрлех Польша командованийĕ çакăн пек каланă: вăл хăй уйрăм дивизисене, вĕсене туса йĕркелесе çитернĕ май, фронта ăсатма кирлĕ тесе шутлать, тенĕ. Уйрăм чаçсене хатĕрлесе çитерессси кая юлса пынă пулин те, çав шухăша октябрĕн 1-мĕшĕнче мар пулсан та, кăшт каярах пурнăçа кĕртме пур майсем те пулнă. Анчах çав шухăша пурнăçа кĕртмен тата Польшăн командованийĕ Польшăн туса çитернĕ дивизийĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ярасси çинчен пĕр ыйту та лартман. Совет правительстви Польша командованине çав ĕçре васкатма май çук тесе шутланă, анчах çапах та Польша чаçĕсене тума тытăннăранпа 5 уйăх иртсен, уйрăмăн илсен 1942 çулти февраль уйăхĕнче, Совет правительстви Польша чаçĕсем гитлеровецсене хирĕç хăçан вăрçма тытăнассипе интересленсе пăхнă. Кунта хăйне хатĕрленсе çитнĕ тесе шутлакан 5-мĕш дивизине асăннă пулнă. Çав ыйтăва лартса, Совет правительстви, чи малтан, 1941 çулхи августăн 14-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Польша хушшинче вăрçă ыйтăвĕсемпе тунă килĕшӳвĕн тӳрĕ те уçăмлă положенийĕсене асра тытнă, çав килĕшӳвĕн 7-мĕш пунктĕнче çапла каланă пулнă: «Польшăн çар чаçĕсене, çапăçăва тухма пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ май, фронталла ăсатмалла пулать. Вĕсем, правилло пекех, дивизирен кая мар тăракан соединенисемпе вăрçа тухаççĕ тата вĕсемпе ССР Верховный Командованийĕн оперативнăй планĕсем тăрăх усă курмалла пулать», тенĕ.

Вăрçă ыйтăвĕсемпе тунă килĕшӳ çавăн пек çирĕппĕн кăтартса панă пулин те, Андерс генерал Польша правительстви ячĕпе юлашкинчен çапла каланă: поляксем ытти фронтсенче бригадăсемпе те çапăçăва кĕреççĕ пулсан та, вăл хăй уйрăм дивизисене çапăçăва кĕртме кирлĕ мар тесе шутлатăп, тенĕ. Андерс генерал: Польшăн пĕтĕм çарĕ нимĕçсене хирĕç çапăçăва хутшăнма 1942 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне хатĕрленсе çитет, тесе сăмах панă. Çакă паллă, июнĕн 1-мĕшĕнче те, чылай кайрантарах та Польша командованийĕпе Польша правительстви Польша çарне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта яма хатĕр тăнине кăтартса памарĕç. Кунтан та ытларах, Польша правительстви хăйĕн чаçĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ярассинчен формально та парăнчĕ, вăл çакăн пек сăлтав çине тӳнтерчĕ: «уйрăм дивизисемпе усă курни нимĕн те памасть» тата «пĕр дивизи çапăçăва тухма хатĕрленсе çитни пирĕн ĕмĕтсене тӳрре кăлармасть», терĕ. (Сикорский генерал 1942 çулхи февралĕн 7-мĕшĕнче янă телеграмма).

Çав вăхăтрах, Лăпкă океан çинче вăрçă тухнине пула ССР Союзне продовольстви çителĕклĕ килсе тăрайми пулчĕ. Çакă ĕнтĕ вăл, çапăçакан войскăсене çителĕклĕ снабжени парса тăрас шутпа, çапăçăва кĕмен войсковой чаçсене паракан пайоксен хисепне чакарасси патне илсе пычĕ. Польша командованийĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта Польшăн мĕнле те пулин çар чаçĕсене ярас тĕлĕшпе нимĕнле кăмăл та туманнине кура тата çав çар чаçĕсене инçетри тылра малалла та тытса тăнине кура, Совет правительствин, паллах, çав чаçсем çине çапăçăва хутшăнман войскăсем çине пăхнă пек пăхма лекрĕ, çавăн пирки ĕнтĕ çапăçăва хутшăнман войсковой чаçсем валли продовольстви пайокĕсене чакарасси çинчен йышăннă решение Польшăн çар чаçĕсем тĕлĕшпе те ĕçе кĕртмелле пулчĕ.

Çавна май, Совет правительстви продовольстви пайокĕсен хисепне 1942 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 44 пине çити чакарма тата, Польша правительстви кăмăлланă тăрăх, Польша çарĕн Совет Союзĕнче юлнă 44 пин çынран ытлашшине Ирана эвакуацилемешкĕн ирĕк пама йышăнчĕ. Çав эвакуаци 1942 çулхи март уйăхĕнче туса иртернĕ, унчухне ССР Союзĕнчен поляк çар служащийĕсем 31.488 çын тухса кайнă. Вĕсемпе пĕрле поляк çар служащи çемьисен членĕсене 12.455 çынна тухса кайма ирĕк панă.

Хăйĕн çарне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ярассинчен пăрăнса, Польша правительстви çав вăхăтрах СССР территорийĕ çинче Польша çарне çĕнĕрен çынсем илес тĕлĕшпе Совет правительствинчен килĕшӳ ыйтнă. Польша çарне çĕнĕрен çынсем илес тĕлĕшпе панă сĕнӳпе пĕрлех, Польша правительстви Совет правительствине нота панă, çав нотăра Польшăн çар чаçĕсемпе пачах та урăхла усă курасси çинчен каланă, çакă ĕнтĕ вăл, нимĕне те мар, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Польша çар чаçĕсемпе усă курассинчен пăрăннине кăна пĕлтерет. Çав 1942 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче панă нота çине ответлесе, Совет правительстви Польша правительствине çакăн çинчен пĕлтерчĕ: ССР Союзĕпе Польша хушшинчи договора пăхмасăрах, Польша правительстви поляксен ССР Союзĕнче туса йĕркеленĕ çар чаçĕсемпе усă курма май çук тесе шутлать пулсан, Совет правительстви Польшăн çар чаçĕсене ССР Союзĕнче малашне йĕркелесе пыма ирĕк пама пултараймасть. Вара çакăн хыççăн Польша çарне ССР Союзĕнчен пĕтĕмĕшпех Çывăхри Хĕвелтухăçне куçарас ыйтăва лартмалла пулчĕ, 1942 çулхи август уйăхĕнче вара Польшăн çар служащийĕсене татах 44 пин çынна эвакуациленĕ.

Çапла ĕнтĕ, гитлерла Германие хирĕç совет войскисемпе пĕрле тăрса кĕрешес ĕçе Польша войскисем хутшăнас ыйтăва Польша правительстви кун йĕркинчен кăларса пăрахрĕ. Малтан шантарса каланине пăхмасăрах тата 1941 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнчи декларацире «Польша республикин Совет Союз территорийĕ çинче вырнаçса тăракан войскисем нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç совет войскисемпе алла аллăн тăрса вăрçĕç» тесе тупа туса каланине пăхмасăрах, Польша правительстви çав ыйтăва хирĕçле решени йышăнчĕ.

Иккĕмĕш хут эвакуациленĕ чухне Польша çарĕн командованийĕ Польша çарĕн чаçĕсемпе пĕрле поляк çар служащи çемьисен членĕсем 20—25 пин çын тухса каясси пирки ыйтнă. Тĕрĕссипе 1942 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне поляк çар служащи çемьисен членĕсене 25.301 çынна эвакуациленĕ пулнă. Çапла ĕнтĕ, пĕтĕмпе 1942 çулта, Польшăн 75.491 çар çыннисĕр пуçне, вĕсен çемьисен членĕсем 37.756 çын ССР Союзĕнчен тухса кайнă.

Юлашки вăхăтра Польша посолĕ г. Ромер поляк çар çыннисен çемьисен членĕсем ССР Союзĕнчен çĕнĕрен 110 çын тухса каясси пирки ыйту хускатнă, вĕсем эвакуаци пуçланнă тĕле эвакуаци пункчĕсене çитсе ĕлкĕреймен пулнă. Совет правительстви çав ыйтăва тивĕçлĕ пек татса пачĕ. Поляк çар служащисен çемьисене эвакуацилесси çинчен Польша çарĕн командованийĕ те, Польша посольстви те Совет правительствине урăх нимĕнле сĕнӳ те паман.

Польша подданнăйĕсен тĕрĕссипе пысăк мар йышне, çавăн пекех тата Совет Союзĕнчен тухса кайнă поляк çар служащи çемьисен членĕсене те ССР Союзĕнчен тухса кайма чăрмантарнă е чăрмантараççĕ тесе калани суя сăмах пулса тăрать.

Çӳлтерехре кăтартса панисем пурте ĕнтĕ çакăн çинчен калаççĕ: Совет Союзĕн территорийĕ çинче Польша çарне ăнăçлăн туса йĕркелеме тата ăна сарса яма май паракан мерăсене Совет правительстви хăй енчен пурне те йышăннă.

1941 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тата 1941 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче панă Деклараци Совет правительствипе Польша правительстви умне питех те паллă тата уçăмлă задачăсем лартнă—гитлерла вăрă-хурахсемпе оккупантсене хирĕç пĕрле кĕрешес ĕçре Совет Союзĕпе Польша халăхĕсен вăйĕсене пĕрлештермелле, çав аслă идейăпа хавхаланнă Польша çарне тумалла тата ăна хăйĕн тăван çĕршывĕшĕн Хĕрлĕ Çарпа çумма-çуммăн тăрса кĕрешме май туса памалла.

Çав задачăна татса парас тесе Совет правительстви мĕн кирлине пурне те турĕ. Польша правительстви вара урăх çулйĕрпе кайрĕ. Вăл хăйĕн дивизийĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта яма шутламарĕ, çав фронтра Польша войскисене Совет войскисемпе алла-аллăн тăрса нимĕçсене хирĕç кĕрешмелле тăвассинчен пăрăнчĕ, çапла вара хăй çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессинчен пăрăнчĕ.

СССР территорийĕ çинче Польша çарне туса йĕркелес ыйту пирки каласан, çавăн пекех тата çакăн çинче те чарăнса тăмалла:

Украинăпа Белорусси халăхĕсен ирĕкĕпе Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсем Украинăн Советлă республикипе тата Белоруссин Советлă республикипе пĕрлештернĕ хыççăн, 1939 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче Верховный Совет Президиумĕ Указ кăларчĕ. Асăннă Указ тăрăх, гражданство çинчен йышăннă Пĕтĕм Союзри законсемпе килĕштерсе, çав облаçсенче пурăнакан çынсем совет гражданĕсем пулса тăчĕç. Эпĕ çӳлерехре кăтартса панăччĕ: Совет правительствипе Польша правительстви хушшинчи отношенисене çĕнĕрен пуçласа янă хыççăн тата Совет Союзĕпе Польша хушшинче вăрçă ыйтăвĕсем тĕлĕшпе 1941 çулхи августăн 14-мĕшĕнче килĕшӳ тунă хыççăн, СССР территорийĕ çинче Польша çарне туса иртерес ĕçе çăмăллатас енĕпе Совет правительстви чылай мероприятисем туса иртерчĕ. Çав çара туса йĕркелеме пулăшас тата ăна кадрсемпе тивĕçтерес тесе, Совет правительстви 1939 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче кăларнă Указа урăхлатса, Хĕвеланăç Украинăри тата Хĕвеланăç Белоруссири çынсенчен поляк çыннисене Польша подданнăйсем вырăнне шутлама хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕ. Совет правительстви çавăн пек ырă кăмăлпа пулнине тата поляксен ыйтăвне тивĕçтерсе пынине пăхмасăрах, Польша правительстви Совет правительствин çав ĕçĕ çине сивлесе пăхрĕ тата Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белорусси территорийĕсем тĕлĕшпе хăйсен законлă мар ыйтăвĕсене ăшра тытса, Совет правительствин ĕçĕпе çырлахмарĕ. Çав вăхăтрах, Польша правительстви 1942 çулхи август уйăхĕнчех,—эпĕ кун çинчен маларах калатăм,—хăйĕн çар чаçĕсене ССР Союзĕнчен илсе тухрĕ, çапла вара Польшăн çар чаçĕсене Совет территорийĕ çинче малалла туса йĕркелесе пырас ыйту тухса ӳкрĕ. Çӳлте кăтартса панă обстоятельствăсене пула, поляк çыннисем тĕлĕшпе тунă улшăнусем, Совет правительстви 1941 çулхи декабрь уйăхĕнче туса иртерме йышăннă улшăнусем, кирлĕ мар пулса тăчĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ Совет правительстви 1943 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче Польша правительствине çапла пĕлтерчĕ: поляк çыннисем тĕлĕшпе 1939 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче кăларнă Указра улшăнусем тума хатĕр тăни çинчен Совет правительстви хăй маларах пĕлтернине пăрахăçа тухнă тесе шутлать тата гражданство çинчен йышăннă совет законĕсен постановленийĕсем поляк çыннисене пырса тивменни çинчен калакан ыйту пăрахăçа тухнă тесе шутлать.

СССР территорийĕ çинче поляксен çар чаçĕсене туса йĕркелес тата çав чаçсене Совет Союзĕнчен илсе тухас обстоятельствăсене тĕпĕ-йĕрĕпех çутатса паракан фактсем çакнашкал ĕнтĕ.

II. Нимĕç захватчикĕсем йышăннă районсенчен куçса килнĕ поляк çемьисене пулăшни çинчен

Совет Союзĕ Польша правительствипе çĕнĕрен çыхăну тытма тытăнсанах, 1941 çулхи çулла Совет правительстви Совет Союзĕнчи поляк гражданĕсене пулăшас ĕçе организацилес тĕлĕшпе Польша правительствине хавассăн пулăшса пынă. Совет правительстви Совет Союзĕнчи нумай хуласенче Польша посольствин представительствисене уçма ирĕк панă. Çавăн пек представительствăсене Совет Союзĕнче 20 вырăнта уçнă. Польша посольствин çав представительствисен поляк гражданĕсене материальнăй пулăшу парса тăмалла пулнă. Çак пулăшăва вĕсем çи малтан Совет правительстви ятарласа панă 100 миллион тенкĕлĕх заем шучĕпе парса тăнă, çав заема эпĕ маларах кăтартнă 300 миллион тенкĕлĕх заемран пуçне панă пулнă. Çав пулăшăва тата Польша посольствин укçинчен, унтан посольствăна ютçĕршывсенчен ярса тăнă укçа-тенкĕрен парса пынă.

Совет Союзĕн 20 пунктĕнче Польша посольствин специальнăй представительствисене уçнипе пĕрлех Совет правительстви тата Польша посольствине шаннă çынсем лартса тухма ирĕк панă. 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ Польша посольствин 421 шаннă çыннине вырăна лартма ирĕк панă, çав çынсене вырăнти органсем ĕçре пур майсемпе те пулăшса пынă.

Çапла ĕнтĕ, Польша посольстви Совет Союзĕн пĕтĕм территорийĕнче хăйĕн йышлă представителĕсене лартса тухма май илнĕ, çав представительсем урлă вăл Польша гражданĕсене тăтăшах пулăшса тăма пултарнă тата Польша гражданĕсене Совет Союзĕпе Польшăна пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеттерес майлă çавăрма пултарнă, çак ĕçре вăл Польша посольстви Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ пулăшнипе кăларса тăнă «Польска» ятлă хаçатпа та усă курма пултарнă.

Посольство представителĕсене тата унăн шаннă çыннисене хăйсен ĕçĕсене ăнăçуллăн туса пыма совет влаçĕ пур условисем те туса панă.

Совет правительстви поляк гражданĕсене пулăшас тесе тата финанспа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк ĕçсем тунă, çав ĕçсене вĕсене чухăн поляк гражданĕсене материальнăй пулăшу ытларах пама пултăр тесе тунă. Совет Правительстви Польшăн пулăшу паракан учрежденийĕсем валли ятарласа продовольстви фончĕсем уйăрса хунă тата Польша гражданĕсем валли яракан грузсене чугунçулсем тăрăх йӳнĕрех хакпа турттармалла тунă. Совет влаçĕсем туллин пулăшса пынипе Польша посольстви пулăшу паракан 589 учреждени (столовăйсем, ача çуртĕсем, ача яслисем, инвалидсен çуртĕсем тата ыттисем те) организациленĕ. Çапла ĕнтĕ, поляк халăхне пулăшас тесе, поляк халăхне материальнăй пулăшу парса тăма уçнă поляк учрежденийĕсем анлăн та лайăххăн ĕçлеме пултарччăр тесе мĕн тумаллине пурне те тунă.

Польшăн вырăнти представительствисене тата вырăнти совет органĕсем те (ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен исполнительнăй комитечĕсем) нумай пулăшнă, вĕсен ĕçне сарса яма пулăшнă; поляк гражданĕсене пулăшас, вĕсене апат-çимĕç, хваттер, вутă, медицина пулăшăвĕ парас, ĕç тупса парас тата ытти тĕлĕшпе те пуринчен ытла çав вырăнти совет органĕсем ĕçленĕ те ĕнтĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи питĕ йывăр условисене пула çав ĕçсене тума çăмăл пулман. Çавăн пек условисенче поляк гражданĕсене материальнăй пулăшу парас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлеме Польша представителĕсене нумай майсем туса панă. Анчах та тĕрĕссипе ĕç çапла пулса тăнă: Польшăн вырăнти представительствисем тата вĕсен чылай сотрудникĕсемпе шаннă çыннисем вырăнти совет органĕсемпе килĕштерсе ĕçлесе хăйсен ĕçĕсемпе обязанноçĕсене ырă кăмăлпа туса пырас вырăнне Совет Союзне хирĕçле разведка тăвас çул çине тăнă.

Çакăншăн айăплă çынсене суда панă. Суд çакна палăртнă: хăйсен разведка тăвас ĕçне посольствăн вырăнти представителĕсем «пулăшу парас» ĕçпе витсе тата начар пурăнакан поляк гражданĕсемпе анлăн усă курса туса пурăннă, темиçе поляк гражданĕн Совет Союзне хирĕçле преступникла çав ĕçне тĕпрен организацилекенсем посольствăн хăшпĕр дипломатиллĕ сотрудникĕсем пулнă, вĕсем çав преступникла ĕçе ырланă, организациленĕ тата ертсе пынă. Çапла, акă, тăрă шыв çине кăларса çак çынсене Совет Союзĕнчен кăларса янă: Польшăн çар миссийĕн пуçлăхĕ пулнă Воликовский генерала, (Воликовский вăл Совет Союзĕнче шпионаж сарас, шпионла ĕçсем тăвас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăнă), посольствăн пĕрремĕш секретарĕсене—Арлета тата Залонские (Залонский пĕр вăхăтрах посольствăн Владивостокри представителĕ пулса ĕçленĕ), иккĕмĕш секретарĕсене—Груяна (Архангельск облаçĕнчи представителе) тата Глоговские, посольство атташшине Роля-Яницкие, Словиковские, Плоские, Лицкиндорфа, Костялковские, Хейцмана тата ыттисене те кăларса янă; çаксенчен нумайĕшĕ пĕр вăхăтрах тĕрлĕ крайсемпе облаçсенче посольствăн представителĕсен обязанноçĕсене те туса тăнă. Çак кăтартнă çынсемсĕр пуçне тата Совет Союзне хирĕç туса пынă преступникла ĕçе посольствăн ытти представителĕсем тата представительствăсен сотрудникĕсем хутшăннă, вĕсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттарнă. Вĕсенчен пĕр пайне Совет Союзĕнчен хăваласа кăларса янă, теп пĕр пайне суда парса тĕрлĕ срокла хупса лартмалла тунă.

Калас пулать, Польша посольствин уголовнăй йĕркепе ответ тыттарнă представителĕсемпе сотрудникĕсенчен ытларахăшĕ разведка ĕçне туса тăнисĕр пуçне тата суя элекле, Совет Союзне хирĕçле хыпарсемпе суя сăмахсем тăтăшах сарса пурăннă, çак хыпарсемпе суя сăмахсене совет йĕркисем çинчен усал ят сарас тесе тата поляк гражданĕсене совет çыннисемпе тарăхтарса хирĕçтерес тесе сарнă. Польшăн çав представителĕсем час-часах тата гитлеровецсене мухтанă, Хĕрлĕ Çара хирĕç усал сăмахсем каланă, вăрçăра парăнас хыпарсем, провокациллĕ хыпарсем сарнă. Çав çынсенчен тата уголовнăй йĕркепе ответ тыттарнă çынсенчен нумайĕшĕ судра хăйсем преступникла ĕçсем туса пурăннине йышăннă, вĕсем çав ĕçсен ăшчиккипе меточĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă.

Тата çакна палăртас пулать: посольство „курьерла почтăна çӳретмелли инструкци" кăларнă, унта курьерсене законсăр ĕçсем тăвас тĕлĕшпе, хăйне уйрăм шифрпа, условнăй кодпа, условнăй парольсемпе тата ыттисемпе те усă курас тĕлĕшпе практикăллă кăтартусем панă.

Посольствăн хăшпĕр представителĕсем хăйсен преступникла ĕçĕнче нимĕнле майсемпе методсене те тиркесе тăманни пĕр документран курăнать; вăл документ—посольствăн атташи Повежа господин ала пусса 1942 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче Алма-Ата хулинчи доареннăй Венцек господина янă официалнăй отношени пулса тăрать. Çав отношенире çапла каланă: „Малтан калаçнисем çумне хушса, пан, эпĕ Польша республикин посольствин сирĕн делегатура тĕлĕшпе йышăннă решенийĕ çинчен каласа паратăп: 1. Сире чи сыхланулла та секретлă майсемпе хаклă япаласем сутăн илсе хума ирĕк параççĕ."

1942 çулхи майăн 31-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ Польша посольствине унăн хăшпĕр представителĕсем Совет Союзне хирĕçле шпионла ĕçсем тунă пирки асăрхаттарнă пулнă. Анчах çапла асăрхаттарни çителĕксĕр пулса тăнă. Польша посольствин сотрудникĕсем, вĕсене асăрхаттарнă пулин те, Совет Союзне хирĕç разведка тума тата ытти тăшманла ĕçсем тума чарăнман. Вара 1942 çулхи июлĕн 20-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ посольствăна çапла пĕлтернĕ: Польша представительствисен институтне, вăл вырăнлă пулман пирки, хупмалла, тенĕ.

Нимĕç захватчикĕсем йышăннă районсенчен куçса килнĕ поляк çыннисене пулăшас ĕç çинчен калакан тата Польшăн Совет Союзне хирĕçле хăшпĕр представителĕсем Совет Союзĕнче мĕнле ĕçленине кăтартакан фактсем çавăн пек ĕнтĕ.

Эпĕ кăтартнă çав фактсемех те ĕнтĕ Польшăн представителĕсем тата официальнăй пичечĕ юлашки вăхăтра Совет Союзне хирĕç тунă йышлă элекле выступленисем çине эпир памалли ответ пулса тăма пултараççĕ. Çавăн пек выступленисен суялăхĕ тата вĕсем советсене хирĕç пыни Совет Союзĕпе Польша пĕр-пĕринпе чăннипе туслăн тата таччăн çыхăнса тăрас ĕçе чарма пултараймаççĕ; çавăн пек çыхăну тытни вăл Совет Союзĕпе Польша халăхĕсене, уйрăмах та хăйсен пĕрлехи тăшманне хирĕç—гитлерла Германие хирĕç тăнă вăхăтра кирлĕ.

* * *

А. Я. Вышинский юлташ Англипе Америка пичечĕн представителĕсене çапла каланă: эпĕ хамăн заявленире кăтартнă ыйтусемпе çыхăнса тăракан хутсен копийĕсене—Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн памятнăй запискин, 1942 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче Польшăн ĕçри повереннăйне Сокольницкий господина панăскерĕн, тата Совет Правительстви Польша республикин ютçĕршыв ĕçĕсен министрне Рачинский господина 1942 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕнче панă нотăн копине Англипе Америка пичечĕн представителĕсене пама хатĕр, тенĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ И. В. СТАЛИН юлташ Великобритани посолне А. К. Керр господина йышăнни

Майăн 7-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Великобритани посолне А. К. Керр господина йышăннă. Калаçура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Майăн 7-мĕшĕнче Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă, артиллерирен персе тăрса тата çÿлтен бомбăсем пăрахса, тăшманăн тĕреклетнĕ вырăнĕсене аркатса пынă, нимĕçсене вăйлăн тĕреклетнĕ позицисенчен хĕссе кăларса пынă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 27 самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Майăн 6-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 5 танкĕнчен кая мар тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 17 батарейине тата миномётсен 2 батарейине пусарнă, боеприпассен 5 складне тата горючин 5 складне сирпĕнтернĕ. Тăшманăн хурал тăракан икĕ катерне путарнă тата тăшман пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă е пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пирĕн артиллери нимĕçсен вуншар дзочĕсемпе оборона сооруженийĕсене аркатса тăкнă. Пĕр соединенин боецĕсем нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Кавицкий юлташ командир пулса ертсе пыракан танк подразделенийĕ тăшманăн 6 дзотне аркатнă, 6 оруди тата 20 пулемет пĕтерсе тăкнă. Танксенчен персе тата танк гусеницисемпе таптаса, гитлеровецсен пĕр ротине ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр чаçăн боецĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатас шутпа тăшмана хирĕç çапăçнă. Пирĕн подразделенисем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра Михеев юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсен подразделенийĕ нимĕç танкне тата автомашинине аркатнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделенисем, артиллерийĕн персе тăнине хÿтĕленсе, пĕр хутора çĕрле ларнă тăшмана сасартăк атакăланă. Лейтенант Изотов командир пулса ертсе пыракан подразделени хуторăн çурçĕр-хĕвелтухăç енчи хĕррине вăркăнса кĕнĕ. Кĕçĕн лейтенант Козлов командир пулса ертсе пыракан боецсен тепĕр группи тăшман тылне тухса, хутора кăнтăр-хĕвеланăç енчен пырса кĕнĕ. Çапăçура пирĕн подразделенисем темиçе вуншар нимĕçе вĕлерсе, хутора йышăнса илнĕ.

* * *

Чугуевран çурçĕртерехре пирĕн разведка тăвакан отряд Çурçĕр Донец шывĕ урлă каçнă та оборона ĕçĕсем тăвакан нимĕç салтакĕсене тапăннă. 35 гитлеровеца вĕлерсе тата темиçе çынна тыткăна илсе, пирĕн разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Волхов фронтĕнче тăшмана хирĕç персе тăнă. Пирĕн артиллеристсем тăшманăн 22 дзотне, 7 блиндажне аркатнă, 4 орудине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ тата нимĕç салтакĕсем ларса пыракан 5 лодкăна путарнă.

* * *

Житомир облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ чугунçул линине пÿлсе лартнă. Часах çав тĕлте нимĕç эшелонĕ чарăннă. Совет патриочĕсем вагонсене вăркăнса кĕрсе 60 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Унтан партизансем эшелона вут тĕртнĕ те чылай вырăнсенче чугунçула сирпĕнтернĕ. Ровно облаçĕнче партизансен группи чугунçул станцине тапăннă. Станци хуралне пĕтерсе тăкса, партизансем станци сооруженийĕсене тата çулйĕре юрăхсăра кăларнă.

* * *

Курск хули çывăхĕнче нимĕçсем вĕлернĕ совет гражданĕсен виллине пытарнă темиçе шăтăка тупнă. Çак кунсенче «Солянка» ятлă вырăнта гитлеровецсем асаплантарса персе пăрахнă çынсен 45 виллине тупнă. Тăванĕсем çак çынсене палласа илнĕ: Курск станцийĕн главнăй кондукторне Стефан Обуховские, çар çыннин арăмне Ольга Тюленевăна, заводăн пожарнăй охранин начальникне Гаврил Беляева, çăран заводĕн рабочине Александр Тесленкона, пенçионера Александр Гоношвиллине, наборщике Василий Кизилова тата ыттисене те. Шуклинка местечкинче мирлĕ граждансен 77 виллине тупнă. Вĕсем хушшинче çаксене палласа илнĕ: Букреевка ялĕн хресченне Василий Желенкова, Мешкова ялĕнчи колхоз председательне Андрей Сергеева, Касиновски МТС кладовщикне Петр Ларина, Белгински МТС директорне Георгий Хорошева, Евдокия Лехтер учительницăна унăн виçĕ ачипе.

Пирĕн сывлăшри вăйсем тăшман аэродромĕсене пырса çапни

Юлашки кунсенче нимĕç командованийĕ фронт çывăхĕнчи аэродромсем çине авиаци нумай илсе пынă. Майăн 6-мĕшĕнче пирĕн сывлăшри вăйсем тăшман аэродромĕсене вăйлăн пырса çапнă. Нимĕç аэродромĕсене тапăнас ĕçе совет бомбардировщикĕсем, штурмовиксем тата истребительсен пысăк соединенийĕсем хутшăннă.

Пирĕн сывлăшри вăйсем пырса çапнине пула нимĕç авиацие пысăк сиен кÿнĕ. Тăшман аэродромĕсем çинче тата сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 350 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Пирĕн 24 самолет пĕтнĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔ Г. ГАБАЙДУЛИН ЮЛТАШ ШУПАШКАРТА

Майăн 7-мĕшĕнче Шупашкара пирĕн паттăр земляк, тутар халăхĕн чапла ывăлĕ, Совет Союзĕн Геройĕ лейтенант Геннадий Габайдулович Габайдулин юлташ килчĕ.

Майăн 8-мĕшĕнче Г. Габайдулин юлташ ВКП(б) Обкомĕнче тата Шупашкарти госпитальсенчен пĕринче пулса, унта хăйĕн тăван пичче Сабир Габайдулина тĕл пулчĕ.

Ĕнер Совет Союзĕн Геройĕ лейтенант Г. Габайдулин юлташ хăйĕн тăван ялне—пирĕн республикари Комсомольски районри Тукай ялне кайрĕ.

Çулпуç приказĕпе хавхаланса

Ĕнеш ялсоветĕнчи колхозсенче Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне тĕплĕн вĕренеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çулпуçăн приказне итленĕ хыççăн Хĕрлĕ Çара ĕçре пулăшма пулаççĕ. «Звезда» колхоз кăçал планран ирттерсе 8 гектар çине тырă акать. Вăл гектарсем çинче ÿснĕ тырпула пĕтĕмпех Хĕрлĕ Çар оборона фондне парать. Тырă акас ĕçе хаяр хĕрÿллĕн пулса пырать, ялти колхозниксем нормăсене ирттерсе тултараççĕ. И. Марков колхозник тырă акас плана куллен 200 процент таран тултарать. Тоня Васильева, А. Сергеева, П. Петрова çамрăк сухаçăсем талăкри нормăна тăтăшах ирттерсе тултараççĕ.

«Новая жизнь» колхозра Сталин юлташăн приказне уйрăмах ăнланса пынă хыççăн 74 çулхи колхозник А. Алексеев юлташ пĕр талăкра 8 гектар сĕлĕ акрĕ, ĕç нормине 267 процент тултарчĕ. Çавăн пекех 65 çулхи ватă колхозник М. Еремеев юлташ та тырă акас нормăна куллен 200 процент тултарать. Вăл пĕр кун хушшинче 6,5 гектар çине тырă акнă.

В. Веселов.

Шăхасан. (Хамăр корр.).

Елчĕк МТС-ĕ тракторпа тумалли çурхи ĕçсен планне тултарчĕ

ВКП(б) Обкомĕпе Çĕрĕç Халăх Комиссариатне Елчĕк МТС дирекцийĕпе Политотделĕ телеграмма янă, унта вĕсем çапла çыраççĕ:

Майăн 7-мĕшĕнче Елчĕк МТС-ĕ çураки вăхăтĕнче тракторпа тумалли ĕçсен планне тултарчĕ. Çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа 5.186 гектар сухалас вырăнне, МТС 5.207 гектар сухаларĕ. Çураки ĕçĕсене малалла туса пыратпăр.

МТС директорĕ ЯШИН.
Политотдел начальникĕ МИХЕЕВ.

Елчĕк МТС директорне Яшин юлташа, Политотдел начальникне Михеев юлташа

Чăваш АССР Наркомземĕпе Наркомзем Политсекторĕ Сирĕн МТС трактористсене, пĕтĕм коллектива çураки вăхăтĕнче тракторпа тумалли ĕçсен планне тултарнă ятпа саламлаççĕ.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕпе хавхаланнă сирĕн коллектив малашнехи ĕçре татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвассине, тракторпа ĕçлеме палăртнă çулталăк планне чылай ÿстерсе тултарассине, горючипе сĕрмелли япаласене перекетлессишĕн кĕрешĕве вăйлатассине, комбайнсене тата тырпул пухса кĕртмелли ытти машинăсене вăхăтра хатĕрлесе хурассине, çапла вара тырпулсене кĕске вăхăтра пĕр çухатусăр пухса кĕртмелле тăвассине шанса тăратпăр.

Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ ШОРНИКОВ.
Политсектор начальникĕ ПЕТРОВ.

16 колхоз çуракине вĕçлерĕ

ЕЛЧĔК, майăн 8-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Колхозниксем çураки ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Паянхи куна тĕштырăсене 13.469 гектар акнă, 16 колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене акса пĕтерчĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз паян çĕрулмилартма тухрĕ.

Районри МТС ĕç тухăçлăхне кăçал татах та çĕклерĕ. Çуракинче МТС хăйĕн тракторĕсемпе 5.186 гектар сухаласа акмаллаччĕ. Майăн 7-мĕшĕ тĕлне пурĕ 5.207 гектар сухаласа, çураки ĕçĕсен планне МТС 104,5 процент тултарчĕ. Струнков юлташ ертсе пыракан 10-мĕш бригада хăйĕн планне 135 процент пурнăçларĕ.

Ĕнер райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тĕштырăсене акса пĕтернĕ колхозсен председателĕсемпе кĕске канашлу туса ирттерчĕç. Колхоз председателĕсем социализмлă ăмăртура пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлеме кирлине шута илсе, кая юлнă колхозсене 33 плугпа 230 гектар сухаласа акса пама пулчĕç.

Н. Волков,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ

Хăвăртрах акмалла

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 7-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Сталин юлташăн 1943 çулти майăн 1-мĕшĕнчи историллĕ приказĕ районри колхозсемпе колхозницăсен ĕçри хастарлăхне çĕклерĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тĕштырăсене тата пăрçа йышши культурăсене 5 талăк хушшинче акса пĕтерчĕç. Çураки планне тултарнă хыççăн колхоз татах 10 гектар тырă акрĕ, кунта пухса илнĕ тырра колхоз йăлтах оборона фондне парать.

Суха тăвакансем Розов, Кондратьев, Васильева, сÿрелекен Сидорова юлташсем ĕç нормине 130 процент тултарса ĕçлерĕç.

Уйхир ĕçĕсем «Самолет», «Новая жизнь», «Коминтерн» колхозсенче те ăнăçлăн пыраççĕ. Ку колхозсем çурхи тырăсене паян акса пĕтереççĕ. «Трудовик» колхозри 15 çулти В. Еремеев кăçал суха турĕ. Вăл çамрăк пулсан та кулленех 1,30 гектар сухалать.

Анчах районра уйрăм колхозсем ака ĕçне вăраха ячĕç. Кăна уйрăмах ăнлантаруллă ĕç япăх пулса пынă колхзсенче курма пулать: «День урожая» колхоз 353 гектартан 88 гектар çеç акнă. Ялти парторганизаци колхоз правленине пулăшмасть.

Колхозăн лашасем начар, вăрлăх çитмест, ĕç тухăçлăхĕ япăх.

«Заветы Ленина» колхоз 6—7 кун ĕçлесе те 208 гектартан 63,8 гектар çеç акнă. Энгельс ячĕпе тăракан тата «Красный Тоганаш» колхозсем тырра алăпа акаççĕ, çураки планне халĕ те 50 процент çеç пурнăçланă.

Х. Лисин.

Уйхир стахановецĕсем

Услапари «Броневик» колхоз çурхи тырăсене акса пĕтерчĕ. 8 талăк хушши тимлĕн ĕçлесе, колхозниксем тĕштырăсене 212 гектар акрĕç, вăл шутра сеялкăсемпе 155 гектар акнă.

Çуракинче уйрăмах çамрăксем, комсомолкăсем пултаруллăн ĕçлерĕç. П. Рахматова юлташ 11 ретлĕ сеялкăпа икшер смена хушши ĕçлесе талăкра 8-шер гектар акса пычĕ. Хăйне уйăрса панă 4 лашана вăл вăхăтра кантарса пычĕ, икшер лашан улăштарса ĕçлерĕ.

Тырра сеялкăсемпе акас ĕçре Т. Петрова комсомолка та пысăк пултарулăх кăтартрĕ. Вăл хăйĕн сменинче 5-шер гектар акса пычĕ. П. Рахматовпа Т. Петрова юлташсем 8 талăк хушшинче 40-шер ĕçкунĕ ĕçлесе турĕç.

Çамрăк сÿреçĕ В. Сорокин талăкра 4-шер гектар сÿреленĕ. Суха тăвакан çамрăк хĕрачасем: З. Максимова, О. Федорова, З. Волкова кунне икшер гектар сухаласа пычĕç.

Çуракине ăнăçлăн туса ирттерме колхоз конюхĕсем тăрăшса ĕçлени пулăшрĕ. Вĕсем ĕçрен таврăннă лашасене тимлĕн пăхрĕç.

Çуракинче хастарлăн ĕçлесе ĕç нормине ирттерсе тултарнăшăн нумай çамрăксем хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх натурăпа преми илме тивĕçлĕ пулчĕç.

С. Шадин,
Красноармейски район. **(Хамăр корр.).**

Ăмăрту сарăлсах пырать

КУСЛАВККА. Майăн 8-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Комбинат коллективĕ, Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, май уйăхĕнчи ĕç планне 108 процент тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 3 процентран кая мар чакарма пулнăччĕ. Коллектив халĕ çав обязательствăсене пурнăçласа пырать. Нефедов юлташ начальник пулса тăракан цехри рабочисем хăйсен заданийĕсене кулленех ирттерсе тултараççĕ. Швейцбродпа Забродин юлташсем майăн 6-мĕшĕнче пĕр кунхи нормăна 480 процент тултарчĕç. Çавăн пекех Пушкин юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри рабочисем те уйăхри задание 20 кун хушшинче пурнăçлассишĕн хастарлăн ĕçлеççĕ. Стахановец Пылкин юлташ пĕччен 6 çыншăн ĕçлесе пырать. Майăн 3-мĕшпе 4-мĕш кунĕсенче пĕр кунхи ĕç нормине 650 процент пурнăçларĕ.

Çак кунсенче пур цехсенче те ĕç тухăçлăхĕ ÿсрĕ. Цехсен коллективĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Сăмахран, Дружинин юлташ ертсе пыракан цех иртнĕ уйăхсенче юлса пынă пулсан, халĕ вунă кунлăх плана виçĕ кун малтан пурнăçларĕ.

Комбинатра ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Май уйăхĕн производство планне майăн 20-мĕш тĕлне пурнăçлама пулать.

Н. Петрученко,
Партбюро секретарĕ.

Сталинла вахтăна тăрса ĕçлеççĕ

Бунин директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводри стахановецсем, Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, фронта ытларах продукци парассишĕн сталинла вахтăна ĕçлеме тăчĕç. Стахановец-слесарь, ВКП(б) членĕ Мищенко юлташ кашни кунхи ĕç нормине 581 процент тултарать, фрезеровщик Королев юлташ 470 процент, комсомолец-токарь Мухамедов юлташ 320 процента çити тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем тухăçлă ĕçленипе пĕрлех пысăк пахалăхлă продукци тăваççĕ. Кинзбургскипе Троицкий юлташсем начальник пулса тăракан цехсенчи рабочисем те кулленхи ĕç нормине икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Завод коллективĕ уйăхри производство программине майăн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Е. Огородникова.

Производствăлла çĕнĕ çĕкленÿ

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказĕ Шупашкарти эрех заводĕнче производствăлла çĕнĕ çĕкленÿ пуçарчĕ. Рабочисемпе работницăсем, техниксемпе инженерсем Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ. Заводри паллă стахановецсем К. Кузьмина, Воротникова юлташсем, апрель уйăхĕнче ĕç нормине 140 процент тултарнăскерсем, çак уйăхра нормăпа пăхнинчен икĕ хут тухăçлăрах ĕçлеме обязательство илчĕç. Халĕ вĕсем кулленхи заданисене кашни кун 200 процент тултарса пыраççĕ.

Завод апрель уйăхĕн производство планне 102 процент тултарчĕ, çак уйăхра ĕç планне 120 процентран кая мар тултарассишĕн халĕ хĕрÿллĕ кĕрешÿ пырать.

Г. Фройман,
Завод директорĕ.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, пĕрремĕш арми ĕнер Меджез—Эль-Баб патĕнче пуçласа янă наступлени ăнăçлăн пулса пырать. Пĕрремĕш армин войскисем йышăнса илнĕ рубежсене çирĕп тытса тăраççĕ, бронетанковăй вăйсем Тунис патнелле нумай куçнă. Тăшман çыннисем тата унăн техники нумай пĕтнĕ. Фронтăн çурçĕр участокĕнче американецсен иккĕмĕш корпусĕ 4 пункта йышăнса илнĕ хыççăн, Америка войскисен малти пайĕсем Бизертăран 15 километртан çывăхарах тăраççĕ. Çав секторта юлашки темиçе кун хушшинче американецсем 1.000 çын ытла тыткăна илнĕ. Кăнтăрта саккăрмĕш арми Сауафран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре атака тунă.

Французсен Çурçĕр Африкăри штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, çыран хĕрринчи сектора французсен корпусĕ Бизерта еннелле малалла ăнăçлăн куçса пырать.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер ирхине пĕрремĕшпе саккăрмĕш армисем тата американецсен корпусĕ наступлени пуçласа янă. Темиçе кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн, пĕрремĕш арми войскисем çапăçусем туса Джабель—Бу-Ауказ тÿпемĕ патне çитнĕ, тăшмана унтан хĕссе кăларса тÿпеме тăшмантан пĕтĕмпех тасатнă, ăна хăйĕн аллинче çирĕппĕн тытса тăрать. Англичансем йышăнакан позицирен Тунис патĕнчи тÿремлĕх лайăх курăнать.

АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине Америка войскисем Ферривиле кĕнĕ.

Алжирти радио юлашки сехетсенче пĕлтернисем тăрăх, союзниксен войскисем Бизертăпа Тунис хĕррисене кĕнĕ.

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Тунис базинчи самолечĕсем, апрелĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа майăн 2-мĕшне çитиччен тăшманăн 14 карапне путарнă, 10 карапне сиенленĕ. 20 карап çинче пушар тухнă. Апрель уйăхĕнче кăна Çурçĕр-Африкăри базăсем çинчи авиаци тăшманăн 193 транспортнăй самолетне персе ÿкернĕ.

СОЮЗНИКСЕН ВОЙСКИСЕМ ТУНИСПА БИЗЕРТĂНА ЙЫШĂННА

ЛОНДОН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çумĕнче ĕçлекен Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Туниспа Бизертăна йышăнса илни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

Тĕрĕслесе килнĕ материалсем тăрăх

«Чăваш Коммуни» хаçатăн мартăн 23-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Х. Лисин Çĕмĕрле районĕнчи хăшпĕр организацисем Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисемпе фронтран аманса килнĕ боецсене тивĕçлĕ пулăшманни çинчен çырнăччĕ.

Фронтран аманса килнĕ Ф. Немцев «Партизан» артеле çĕлĕк çĕлетес ыйтупа виçĕ хутчен пынă, кашнинчех ăна—«халĕ материал çук», тесе ăсатса янă. Çав вăхăтрах хăйсен çывăх çыннисене çĕлесе панă. Ф. Немцев вутă илес пирки райисполкома пынă. Унта ăна «ху çара кайиччен ăçта ĕçленĕ, çавăнта ил», тенĕ. Кун хыççăн çак ыйтупах комбината пырсан, «эпир фронтовиксем валли вутă хатĕрлемен», тесе ответленĕ.

Атă-пушмак юсакан «Красный Октябрь» артель те фронтовиксен çемьисен заказĕсене «материал çук» тесе йышăнмасăр тăнă. Çав вăхăтрах хăйсен çывăх çыннисенчен юсама заказсем йышăннă.

«Чăваш Коммуни» хаçат редакцийĕ Çĕмĕрле райсовет исполкомне хаçатра кăтартнă çитменлĕхсене тĕрĕслеме, çитменлĕхсене пĕтерес пирки мерăсем йышăнма ыйтнăччĕ. Çĕмĕрле райисполкомĕ çапла пĕлтерчĕ: çак ĕçе тĕрĕслесе, «Партизан», «Красный Октябрь» артельсен председателĕсене Полумордвиновпа Щеглова çавăн пек тума юраманни çинчен асăрхаттарнă тата хаçатра асăннă ытти çитменлĕхсене те пĕтернĕ, тесе пĕлтерчĕ.

Пирĕн землякcем

Тăшман танкĕсене пĕтерекен хăюллă командир

Ана Чăваш республикинче пĕлмен çамрăксем те сахал пулĕ. Иван Григорьев Хĕрлĕ Çар ретне киличчен ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче пионер пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Шăхасан районĕнче Ешкилть ялĕнче çуралнă.

Ваня çар ĕçне тĕплĕн вĕреннĕ. Вăл Хĕрлĕ Çар отличникĕ пулнă. Кашни боец, командир ун пек пулма тăрăшнă.

Ирсĕр тăшман Гитлер тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнса кĕрсен, Григорьев хăйĕн паттăр, шанчăклă воинĕсемпе пĕрле çапăçăва кĕнĕ.

...1941 çул. Ноябрь. Донбасс çĕрĕ çинче йывăр çапăçу пынă. Старши сержант Григорьев хăйĕн взводĕнчи боецсемпе Д. чугунçул станцинче оборонăра. Тăшман темиçе хут та станцине тытса илесшĕн тапăннă, анчах шикленме пĕлмен взвод геройла çапăçнă.

Гитлеровецсем тăваттăмĕш наступленине 6 танк тата пĕр рота кĕртсе янă. Анчах боецсем хăрама пĕлмен. Вĕсемпе пĕрле — хăюллă командир Григорьев.

— Оружие к бою! — команда панă Григорьев. — Истребителям танков приготовить гранаты!

Тăшман танкĕсем пехотăпа пĕрле

пирĕн оборона патне çывхарнă-çемĕн çывхарнă. Боецсем хăйсен пăшалĕсенчен тăшман салтакĕсем çине çав тери вăйлăн пенĕ. Пехотăн çулне пÿлсе лартнă. Танксем çаплипех станци патнелле пынă. Денисюкпа Путицын гранатăсемпе виçĕ танкăн гусеницине аркатнă, ытти танксем каялла тарнă.

Çакна кура Григорьев юлташăн взвочĕ контрнаступление куçса, тăшманăн ротине çапса çĕмĕрнĕ. Григорьев юлташ, хăй аманнине пăхмасăрах, çапăçăва ăнăçлăн ертсе пынă.

Паттăр командира Правительство пысăк хисеп тунă. Кăнтăр фрончĕн Çар Совечĕ Григорьев юлташа «За боевые заслуги» медаль парса наградăланă.

Тăшмана Çурçĕр Кавказран хăваласа кăларнă чух старши лейтенант Григорьев юлташăн батальонĕ тăшман оборонине çĕмĕрсе Краснодар хулине кĕнĕ. Çав çапăçура вăл хăйĕн автоматĕнчен 12 гитлеровеца персе пăрахнă.

Халĕ старши лейтенант Григорьев соединени политотделĕнче ответлă ĕçре ĕçлет. Командовани ăна иккĕмĕш хут Правительство наградине пама тăратнă.

Лейтенант А. ТОЛСТОВ.
Действующи Çар.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

„Росглаввинон" Шупашкарти эрех комбинатне районсенче сад çимĕççем тата çырла пуçтарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсемпе агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Коммунальнăй слобода, 21-мĕш çурт. Телефон 1—73 (пĕр звонок).

Чăваш АССР Наркомздравăн маляри станцине Атăлăн сулахай енче маляри вăрăмтунисемпе кĕрешме бонификаторсем кирлĕ. Хваттер параççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Красноармейская урам, 3-мĕш номерлĕ çурт.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1047 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.